26-75

Хресҫен пиплиоттекки № 8

Ф. Маттерн

# ҪУМĂР ĂҪТАН ЙЕПЛЕ ПУЛАТ̆

Йуман куҫарнă



Центральное Изд-тво Народов СССР

Москва 1926

# Çумӑр мӗнле пулаҭ.

Çумӑр. Çӑвӗ-ши вӑл йе çумӗ-ши?.. Ђӑнахах та пулӗ-ши вӑл, йе ӑна тен кӗтме те кирлӗ мар-ши ... Çакна хресђенӗн пӗлесех пулаҭ. Çумӑр пулсан тырӑ-пулӑ пулаҭ. Çумӑр пулмарӗ—кавлемелли те пулмарӗ, тет хресђен. Тепӗр йенђен çумӑр йалан çуса ытлашши йӗпене кайсан тырӑ-пулӑ шӳсе йапӑхаҭ.

Çумӑр пулассине йе пулмассинне маларах пӗлсе тӑрасђӗ. Вӑл пулассине пӗр талӑк та пулин малтан пӗлесђӗ. Анђах ӑна пӗлме пулаҭ-ши? Сӳтсе-йавс пӑхар-ха...

Акӑ çумӑр çурӗ. Çумӑр шывӗн пӗр пайӗ çӗре сӑрхӑнђӗ, тепӗр пайӗ пӑсланса çухалђӗ. Сывлӑшри пӑсланнӑ нӳре епир вӑл тӗт-

реленсен ҭасах куҫпа та куратпӑр. Каҫпа ана-ҫаран ҫинҭе, шыв-шур ҫинҭе, пӗве таврашӗнҭе, лаҭакасен лапӗнҭе тӗтре тӗтреленсе тӑннине курманни кам пур? Ӑна кирек кам та ирпе те каҫпа та курнӑ.

Тӗтре йепле майпа пулнине пӗлесси йывӑр мар. Тӗтре вӑл куҫкурми вак, анҭах хисепсӗр нумай шыв тумламӗсем пӗр тӗле пухӑнсан пулаҭ. Тӗтре хӗвел тухиҭҭен йе хӗвел ансан куҫа курӑнаҭ. Хӗвел тухса хӗрте пуҫласан тӗтре куҫ умӗнҭен ҭасах ҫухалаҭ.

Анҭах ӑслӑлӑх кӑтартнӑ тӑрӑх—ҫут ҫанталӑкра нимӗн те сайа кайса пӑҭах ҫухалмасҭ. Ҫутҫанталӑкра кирек мӗнле йапала та пӑ ҭах пӗтмест, вӑл улӑшӑнса урӑх йапалана ҫеҫ ҫаврӑнаҭ. Куҫ умӗнҭен хӗвел хӗртнипе ҫухалакан тӗтре те пӗтӗмпех пӗтмест, вӑл ҫӳлӗрен ҫӳле улӑхса ҫеҫ сывлӑша сарӑлаҭ. Ҫӳлте тӗтре пӗрҭисем, вак шыв тумламӗсем пӗрле пухӑнсан тӗтре вырӑнне пӗлӗт пулса тӑраҭ.

## Сывлăшпа сывлăш йухăмĕсем (çилсем).

Çĕр ҫăмăрне йĕри тавра сывлăш хупласа тăраҭ. Сывлăша епир куçпа кураймастпăр, анҫах ăна тĕрлĕ йенĕпе ҫипер ҫухлатпăр. Сăмахран каласан—ăна епир сăмсана хытă туртса сывласан йе сывлăш тăрăх алла каллĕ-маллĕ хăвăрт сулласан ҫиперех ҫухлатпăр. Унтан сывлăша епир çивҫĕ çил вăхăтĕнҫе питĕ лайăхăн ҫухлатпăр. Çил вăл йухакан сывлăш.

Сывлăш мĕн ҫухлĕ çӳлте—çавăн ҫухлĕ сивĕ. Çакна кирек кам та ҫухлама пултараҭ. Ăна ҫухлас пулсан çӳлĕ ту çине кăна хăпарса анмалла.

Ту питех те çӳлĕ пулсан, ту тăррине утă уйăхĕнҫи шăрăх кунра та пăртак йур тĕл пулма пулаҭ.

Çав сивĕрен сивĕ сывлăш сийĕсене тĕтре айалтан хăпарса сарăлаҭ. Тĕтре çапла майпа айалти ăшă сывлăшран çӳлти сивĕ сывлăша кĕрсе саланаҭ. Кирек мĕнле пăс та сивĕ вырăнта çăралса ҫăмăртанаҭ те куçа курă-

накан пулаҫ. Ҫав ҫӳлте тӗтререн йе пăсран пулнă йапалана епир пӗлӗт тетпӗр. Пăсран пӗлӗт йепле пулнине кашни хресҫен хăй те ҫасах курать. Калăпăр—хӗлле вӗри мунҫа алăкне уҫса йаратпăр, алăк витӗр хӗрӳ нӳрлӗ сывлăш тулалла вӗҫсе йухса тухать, ҫав сывлăш йухăмӗ тула сивӗ ҫӗре тухсанах пирӗн куҫ умӗнҫе тӗтреленсе—пӗлӗтленсе тăрать. Ҫавăн пекек сăмавартан тухакан пăс та пирӗн умра тӗтреленсе ҫавăрăнса тăрать.

Ҫӳлте пӗр ҫăмăртаннă пӗлӗт ӳсме те ҫакса саланма та пултарать. Вăл ҫав пӗлӗт таврашне тата та ҫăралнă пăс кӗпӗрленсен ӳссе пысăкланать. Ҫапла пӗлӗт пирӗн куҫ умӗнҫех ӳссе пысăкланнине епир йаланах куратпăр. Анҫах ҫасах епир пӗлӗт пирӗн куҫ умӗнҫех ҫакса таҫта сухалнине те куратпăр. Акă кăвак пӗлӗт тăрăх шурă пӗлӗт ҫăмăркки хăвăртăн васкаса шуса—йухса пырать. Акă унҫҫен те пулмарӗ—ҫак пӗлӗт ҫăмăрки ирӗлсе ҫака пуҫларӗ. Нумай та вăхăт иртмерӗ—шурă пӗлӗтӗн тӗсӗ те йулмарӗ.

Ăçта кайса çухалҫĕ-ши вăл?

Çапла пĕлĕт саланса пĕтни çил-тăвăлран, сывлăш йухăмĕсенҫен килет. Çав çилсемпе йухăмсем çӳлте те айалта пекех вĕреççĕ. Вĕсем çĕр çинҫи пекех тĕрлĕ йенҫен вĕреççĕ: сивĕреп, кăнтăртан, хĕвелтухăçĕнҫен, хĕвеланăçĕнҫен те вĕрме пултараççĕ. Кăнтăртан вĕрсен çӳлти çилсем ăшă пулаççĕ, сивĕрен вĕрсен вĕсем сулхăн пулаççĕ. Çапла йухса пыракан пĕлĕт çӳлти сивĕ çилне тĕл пулса хутшăнса кайсан вăл аслăланаӗ, мĕншĕн тесен сивве пула сывлăшри пăс тата ытларах пăсланаӗ. Анҫах çав пĕлĕтех, çӳлти ăшă çилпе йе вĕри йухăмпа тĕл пулсан, ҫакса иксĕлме тытăнаӗ, ҫасах вăл тата пăсланса пĕтĕмпех те саланаӗ, мĕншĕн тесен ăшăпа тĕтреленнĕ пăс тата пăсланса куçкурми пулса çухалаӗ.

## Пĕлĕтсем.

Çапла ĕнтĕ çӳлти пĕлĕтсем епир ирпекаçпа сăнакан пăсча тĕтререн ҫамăртанса пулаççĕ.

Пӗлӗтсем тӗрлӗ тӗс-питлӗ пулаççӗ. Хăшӗ вӗсем кайăк тӗкӗ (хур шăмми) йеверлӗ, хăшӗ сийлӗ, хăшӗ кумкалă пулаççӗ.

Вӗçен кайăк тӗкӗ пек пӗлӗтсем çутçанталăкăн кăвак çамки çинҫе таса кӗшӗл пек шуралса саланса йухаççӗ. Вӗçен кайăк тӗкӗ пек пӗлӗтсем ҫи çӳлте çӳреççӗ. Вӗсем çӗртен 10—13 километăр çӳлте йухаççӗ (километтăр çухрăмран кăшт кăна кайа).

Çапла çӳлӗ сывлăш сийӗ ытла та сивӗ: тата сывлăшри пăс шăнса пăрланаҫ. Çаваннa тӗклӗ пӗлӗтсем епир çӗр çинҫе куракан тӗтре йеверлӗ мар; çав пӗлӗтсем пирӗн куçа курăнмаççӗ, вӗсем йӗп вӗçӗ пек вак пăр пӗрҫисем пӗрле пуçтарăннипе пире шуррăн палăрса тăраççӗ. Çав пӗрҫӗсем вак кристалсем йеверлӗ, вӗсем пăс тумламӗсем шăнса пăрланнинҫен пулнă. Тӗк йеверлӗ пӗлӗтсем сывлăш йухăмӗпе айăлалла анас пулсан, айаларахри ăшă сывлăш сийӗсене лекес пулсан ҫасах ирӗлсе сухалаççӗ. Çав тӗк йеверлӗ ирӗлнӗ пӗлӗтсенҫен ҫасах тӗк йеверлӗ-сийлӗ,



Сийлӗ пӗлӗт.



Ҫумӑр пӗлӗҫӗ.

йӗ тӗк йевӗрлӗ—кумкалӑ пӗлӗтсем те пулса кайаҫҫӗ.

Сийлӗ пӗлӗтсем пирӗн куҫа пӗр си ҫине тепӗр си купаланса тӑнӑ пек курӑнаҫҫӗ. Савӑнпа та вӗсене сийлӗ пӗлӗтсем теҫҫӗ. Сийлӗ пӗлӗтсем ҫӗртен нумай ҫӳлте йухмаҫҫӗ.

Кумкалӑ пӗлӗтсем мамӑк куписем йевӗрлӗ. Кумкалӑ пӗлӗтсем хӑш ђухне пӗр пӗрин ҫине хупӑрланса тусемпе сӑртсем йевӗрлӗ курӑнаҫҫӗ.

## Ҫумӑрпа ытти нӳрсем.

Ҫапла ӗнтӗ айалти нӳр: ҫӗр нӳрӗ, йешӗл ӳсетӑран нӳрӗ, йухӑм шывсен, тинӗссен, оккеансен нӳрӗ пӑсласна ҫӳле хӑпарать те пӗлӗт пулать.

Ҫапла пулнӑ пӗлӗтсене сывлӑш йухӑмӗсем тӗрлӗ йенелле хӑваласа ҫӳреҫҫӗ. Йухакан пӗлӗтсем сивӗ ҫилсемпе тӗл пулсан ҫӑралса ђӑмӑртанаҫҫӗ те ҫумӑра ҫаврӑнаҫҫӗ. Ҫумӑр пӗлӗђӗ ахаљ пӗлӗтрен ак мӗн йенӗпе урӑхла: ахаљ пӗлӗтӗн вак шыв тумламӗсем пӗр пӗринђен уйрӑм вӗсеҫҫӗ, ҫумӑр пӗлӗђӗн ҫав

вак тумламсем пӗр пӗринпе ҫынҫӑнса пысӑкланаҫҫӗ те хӑмпӑланса вӗҫеҫҫӗ. Сак шыв хӑмписем те питӗ вак та питӗ ҫӑмӑл та пулаҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсем айалалла анмаҫҫӗ. Анҫах ҫумӑр пӗлӗҫӗ ҫӳлте тата сивӗрех сывлӑш ҫине пырса кӗрсенех шыв хӑмписем пӗр пӗринпе ҫынҫӑнса пысӑкланаҫҫӗ те ҫумӑр тумламӗсем пулса тӑраҫҫӗ. Ҫак тумламсем хӑйсен йывӑрӗшӗпе ҫӳлте вӗҫсе ҫӳреме пултараймаҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсем айалалла ҫӗр ҫине персе анаҫҫӗ.

Ҫапла ӗнтӗ ҫула ҫумӑр мӗнле майпа пулнине епир пӗлтӗмӗр. Малалла йур мӗнле пулни ҫинҫен шухӑшласа пӑхар.

Хӗлле пӗлӗтри шыв пӑсӗ шӑнаҫ. Шӑннӑ пӑс пӗрҫисем ҫӑмӑртанса пысӑкланаҫҫӗ те йур пӗрҫисем пулса тӑраҫҫӗ. Ҫав йур пӗрҫисем вара ҫӑлтӑрсем йевӗрлӗ пулса ҫӗр ҫине вӗҫсе анаҫҫӗ. Ҫуркунне, ҫулла, кӗркунне пӗлӗт пӑсӗ шӑнса хытаймасҫ, вӑл ҫӑмӑртанса ҫумӑр тумламӗ пулса ҫеҫ айала персе анаҫ. Хӗлле

çав пăс пăрланаҫ те тĕклĕ--мамăклă йур пулса анаҫ.

Хăш ђухне çулла та пăр çăваҫ. Вăл ăçтан пулаҫ-ши? Çапла ĕнтĕ нӳр пăсĕ сывлăшăн айалти ăшă сийĕнђен çӳлти сивĕ сине вĕçсе хăпараҫ. Çӳлелле хăпарнăçем пăс шăннăçем шăнаҫ, шăнса çитсен вăл мĕне те пулин перĕнсен сасартăках пăрланса хытаҫ. Çапла шăнса улăхакан пăс тĕк йевĕрлĕ пĕлĕтсем патне çитсен вăл хăвăртах тĕк йевĕрлĕ пĕлĕтсен пăрлă пĕрђисен çумне сыпçăнса хытаҫ. Çапла тĕк йевĕрлĕ пĕлĕтсен вак кристалĕсенђен пăр пĕрђисем пулса тăраççĕ. Çав пăр пĕрђисем хăш ђухне пĕр пĕрин çумне сыпçăнаççĕ те çăмах пек пысăк пăр пĕрђисем те пулса айала персе анаççĕ. Çак майпа çулла ђасах сийенлĕ пăр çăваҫ.

## Шывăн йĕритавралă çаврăнăçĕ.

Шыв çутçанталăкра пĕр вырăнта канлĕ тăманни малта каланинђен тӳрех паллă. Ђăнахах та сăнаса кăна пăхар: акă пирĕн умра шыв, çав шыв нумай тумламран пулнă.

Ҫак тумламсем пирӗн умма килсе ӳкиҫҫен таҫта та ҫӳресе илнӗ. Вӗсем ӗлӗкрех те ҫӗр ҫинҫе шӗвелсе тӑнӑ йе йухнӑ. Унтан хӗвел ӑшшипе вӗсем пӑсланса ҫӳле вӗҫсе улӑхнӑ. Ҫапла вӗсем ҫӳле ытларах шыв-шур (ҫырмасем, кӳлсем, тинӗссем, океансем) ҫинҫен пӑсланса вӗҫнӗ. Ҫӳлте ҫав тумламсенҫен пулнӑ пӑса ҫил тӗрлӗ йенелле хӑваласа ҫӳренӗ. Ҫул ҫинҫе сивӗ сывлӑш сийӗсене — йухӑмӗсене тӗл пулнипе ҫав пӑсран пӗлӗт пулса кайнӑ. Ҫак пӗлӗтрен вӑл ҫӳле улӑхса сивӗ сывлӑша лекнипе ҫумӑр пӗлӗҫӗ пулса тӑнӑ. Ҫак пӗлӗтрен ҫулла ҫумӑр йе пӑр, хӗлле йур ҫуса аннӑ. Ҫапла ҫӳлтен пирӗн ӗлӗк пӑсланса хӑпарнӑ нӳр каллех шыв пулса ҫӗр ҫине аннӑ. Ҫапла аннӑ шыв тумламӗсем пӗрлешсе шыв йухӑмӗсене пухӑннӑ. Ҫав йухӑмсене пуҫтарӑннипе ҫырмасенҫе шавласа йухакан шывсем йухма тытӑнаҫҫӗ. Ҫапла шывпа йухакан тумламсем ӑшӑпа каллех пӑсланса ҫӳле хӑпарӗҫ, каллех сутҫанталӑк тӑрӑх ҫӳресе кайалла ҫӗрҫине

ҫавранса анёҫ. Ҫапла ёнтӗ шыв ёмӗрне каллӗн-маллӗн ҫавӑрнаҭ: вӑл айалтан ҫӳле хӑпараҭ, ҫӳлтен айала анаҭ, вӑл пӑс пулаҭ, пӑсран ҫумӑр тумламне йе пӑрпа йур пӗрҫине ҫаврӑнаҭ, унтан йулашкинҫен татах шывах пулса кайаҭ.

Шыв ҫӗр тӑрӑх йухнӑ ҫух вӑл ҫӗре те сӑрхӑнса пайтах пӗтет. Ҫапла ҫӗре сӑрхӑнакан шыв ҫӗре-айалалла аннӑҫем анаҭ. Вӑл шыва витӗр йаман ҫӗр си тӗл пулсан кӑна тата та анма ҫарӑнаҭ, ҫапла шыва витӗр йаман си ҫасах тӑм пулаҭ. Ҫак ҫӗр айӗнҫе пуҫтарӑннӑ шыв та пӗр тӗлте канлӗ тӑмасҭ: вӑл ҫӑл пулса та пулин ҫӗре шӑтарса ҫийеле сиксе тухаҭ те ытти пысӑк шывшур тавраш не йухма тӑрӑшаҭ. Ҫапла ёнтӗ ҫӗре сӑрхӑннӑ нӳр те ҫанталӑкра ҫӗр ҫинҫи шыв пекех каллӗ-маллӗ ҫавӑрӑнаҭ.

## Ҫумӑр пулассине йепле пӗлмелле?

Ҫумӑр ҫӑвассине уйӑх йе ерне малтан пӗлме май ҫук. Анҫах вӑл пулассине 3—4 кун маларах ҫухлама пулаҭ.

## I. Пĕлĕтĕн сăнăвлă паллисем.

1. Тĕк пек пĕлĕтсем хĕвеланăçĕнҫен, кăнтăрпа хĕвеланăç ҫиккинҫен йе сивĕпе хĕвеланăç хушшинҫен куçа курăнмалла шуса йухаççĕ,—

1—2 кунтан çўлтен нўр çăвассине унтан çанталăк вăрах йĕпене кайассине кĕтсе тăма кирлĕ.

2. Тĕк пек пĕлĕтсем пĕтĕм пĕлĕт тăрăх вăрăм йарăмсемпе йарăмланса иртеççĕ.

3. Тĕк пек пĕлĕтсем ирпе пĕр вырăнта унтан питĕ çўлте курăнаççĕ, хĕвел ăшăтнăçем вĕсем çухалаççĕ.

— Лайăх канлĕ çанталăка кĕтме кирлĕ.

4. Сийлĕ-тĕк пек пĕлĕтсем, тĕк пек пĕлĕтсем иртнĕ тĕлсене тăтăш хупăрласа илеççĕ.

— Тĕттĕм нўрлĕ çанталăка кĕтме кирлĕ, çўлтен нўрсем вăрахăн çăвассине кĕтме кирлĕ.

5. Кумкалă пĕлĕтсем ирпе палăраççĕ, кăнтăрла пысăкланаççĕ, каçпа çухалаççĕ.

— Уйар канлӗ ҫанталӑка кӗтме кирлӗ.

6. Кумкалӑ пӗлӗтсем ирпе палӑраҫҫӗ, кӑнтӑрла ҫӳлелле хӑпараҫҫӗ, хӑш ҭухне айаларах та анаҫҫӗ, каҫпа та ҫухалмаҫҫӗ.

— Ҫил пулмасан ҫумӑр йур пӑр пуласси не кӗтме кирлӗ.

7. Кумкалӑ пӗлӗтсем тусем йевӗрлӗ кумкаланса пысӑкланаҫҫӗ.

— Аслатиллӗ ҫумӑра кӗтсе тӑма пулаҭ.

8. Ирпе кун тӑршшӗпе така ҫӑмӗ йе тӗк йевӗрлӗ пӗлӗтсем каҫпа сийлӗ кумкалӑ пулсакайаҫҫӗ.

Ҫӗрле аслатиллӗ ҫумӑр пулма пултараҭ.

## II. Ҫилӗн сӑнавлӑ паллисем.

1. Ҫанталӑк ҫӗрле канлӗ. Ирпе ҫил пуҫланаҭ, кӑнтӑрла вӑл вӑйланаҭ, каҫпа ҭарӑнаҭ.

Уйар канлӗ ҫанталӑк пуласси не пӗлтерет.

2. Каҫпа ҫил лӑпланмаҫҭ, тата та вайлӑланаҭ. Ҫил-тӑвӑл, канӑҫсӑр ҫанталӑк тапранасси не пӗлтерет.

3. Уйар кун пĕр йенђен вĕрекен çил сасартăк урăх йенђен вĕрме тытăнаť.

Çанталăк улăшăнассине, нўрсем çăвассине пĕлтерет.

4. Çĕр çинђи айалти çил те çўлти пĕлĕтри çил те пĕр йснеллех вĕреççĕ.

Уйар канлĕ çанталăк пулассине пĕлтерет.

5. Айалти çил пĕр йенелле, çўлти çил тепĕр йенелле вĕрет.

Йĕпе пулассине пĕлтерет.

---

Хакĕ 3 пусе

**Ф. Маттерн.** что такое дождь и откуда он происходит. На чувашском языке.

Главлит 56457 Москва Тираж 10.000

Книжная фабрика Центриздата Москва, Шлюзовая наб. 162.